Чăваш Енре кăрлач уйăхĕн 25-мĕшĕнче Раççей Студенчĕсен кунне уявларĕç. Паллă çак пулăма халалласа вăтам тата аслă професси пĕлĕвĕ паракан учрежденисенче тĕрлĕ мероприяти ирттерчĕç. Паллах, Татьянăсем пирки те манмарĕç. Çветтуй Татиана студентсен хӳтĕлевçи шутланать-çке. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче вара ĕнер Студентсен пуçарăвĕсен фестивалĕ иртрĕ. Унта республикăри вĕренӳ заведенийĕсенче наука чулне «кăшлакан» 800 ытла хĕрпе каччă хутшăнчĕ. Хастарсене Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев саламларĕ.

Кăрлач уйăхĕн 25-мĕшне 2005 çултанпа официаллă майпа Раççей Студенчĕсен кунĕ пек уявлаççĕ. Тĕне ĕненекенсем вара ун чухне çветтуй Татианăна, Христос вĕрентĕвне тĕпе хурса чухăнсене пулăшнăскере, ыр кăмăллăх ĕçне хутшăннăскере, асăнаççĕ. Елизавета Петровна императрица 1755 çулта шăпах çак кун "Мускав университетне йĕркелесси çинчен" Указа алă пуснă. 1791 çулта аслă шкулăн сулахай флигелĕнче хĕн-асап тӳснĕ Татиана ячĕпе чиркӳ уçнă, унта студентсем çветтуйран пулăшу ыйтнă, кĕлĕ вуланă, хорта юрлакансем те пулнă. XIX ĕмĕрĕн 60-70-мĕш çулĕсенче Татьяна кунĕ официаллă мар пулин те студентсен кунне çаврăннă. Шăп çав вăхăталла каникул пуçланнă, ку пулăма вĕренекен хĕрсемпе каччăсем питĕ шавлă паллă тунă. Кăрлачăн 25-мĕшĕнче ирхине университетра савăнăçлă пуху иртнĕ, унта тивĕçлисене награда панă, салам сăмахĕсем янăранă. Çак праçнике малтан Мускавра çеç уявланă, кая--рахпа - ытти çĕрте те.

Михаил Игнатьев фестивале пухăннисене саламланă май ку уява паян тĕрлĕ çĕрте вĕренекенсем çеç мар, тахçан студент пулнисем те кăмăлланине палăртрĕ.

- Çамрăксен яланах малта пулма тăрăшмалла, мĕншĕн тесен çĕр-шыв пуласлăхĕ - сирĕн алăра. Мал ĕмĕтлисем кирек мĕнле йывăрлăха та çĕнтерме пултараççĕ. Эпир çамрăксене чăнласах та шанатпăр, çак сăмахсене эпĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă Çырура та палăртнăччĕ. Патшалăхăн тĕп тĕллевĕ - хĕрсемпе каччăсене тĕрлĕ енлĕн аталанмашкăн тивĕçлĕ условисем туса парасси, çапла майпа вĕсем каярахпа Раççее тата тăван Чăваш Ене вăйлăрах тума пултараççĕ, - терĕ Михаил Васильевич.

Унтан Михаил Игнатьев сцена çине тухнă 12 Татьянăна Чăваш Ен Пуçлăхĕн ятарлă стипендийĕн свидетельствине пачĕ. Çак пикесем хитре çеç мар, хастар та пултаруллăS вĕсем вĕренӳре пысăк çитĕнӳсем тунипе пĕрлех республика тата Раççей шайĕнчи конкурссенче малти вырăнсене йышăнаççĕ, спорт ăмăртăвĕсенче çĕнтереççĕ, ыр кăмăллăх ĕçне хутшăнаççĕ, ыттисене ырă тĕслĕх кăтартаççĕ. Татьянăсене хăйсен

уявĕнче чыслани, Чăваш Ен Пуçлăхĕ алă тытсах саламлани хĕрсемшĕн чăнласах та пысăк парне пулчĕ.

ЧР вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов студентсене уявпа тата каникул пуçланнă ятпа саламларĕ. Вăл Чăваш Ен Пуçлăхĕн стипендийĕн лауреачĕсене - общество хастарĕсене - свидетельство пачĕ. Республикăри аслă вĕренӳ заведенийĕсен ректорĕсен Канашĕн председателĕ, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн ректорĕ Всеволод Агаков Раççей Студенчĕсен кунне ăс-тăн, пултарулăх тата илем уявĕ тесе палăртрĕ. Фестивале килнисене çавăн пекех Раççей Федерацийĕн кикбоксинг енĕпе спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ, ЧР Кикбоксинг ассоциацийĕн президенчĕ Алексей Соловьев, "Мегафон" компанин республикăри уйрăмĕн директорĕ Елена Исайкина саламларĕç, çамрăксене яланах хастар та пуçаруллă пулма сĕнчĕç.

**Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА. Газета «Хыпар». 2013. 26 января.**